TURAN-SAM(TURAN-CSR)
YIL: 2012 * CİLT: 4 * SAYI: 15 * YAZ, 2012
YEAR: 2012 * VOLUME: 4 * ISSUE: 15 * SUMMER, 2012
TURAN STRATEJİK ARAŞTIRMALAR MERKEZİ DERGİSİ
(JOURNAL OF TURAN CENTER FOR STRATEGICAL RESEARCHES)
www.turansam.org

**(12)**

# ТĔРЛĔ ТĔНПЕ ПУРĂНАКАН ТĂВАНЛА ТУРККĂ ТАТА ЧĂВАШ ХАЛĂХĔСЕН ПУПЛЕВ НИСЕПĔН ПĔРПЕКЛĔХĔПЕ УЙРĂМЛĂХĔ ÇИНЧЕН[153]

**Dr. Александр КУЗНЕЦОВ**

## (ABOUT SIMILARITY AND DISTINCTIONS OF SPEECH ETIQUETTE THE TURKISH AND CHUVASH PEOPLE)

## ABSTRACT

The etiquette of every nation has similar lines with etiquette of the related nations or neighbouring countries. But there is always difference to some extent from etiquette of other ethnoses. The etiquette of the Turkish and Chuvash people contains distinctive features because of their belonging to different confessions and inhabitancy, because of the neighbourhood with different nations. But there are general Turkic elements at the heart of culture of the dialogue and traditional etiquette. These elements have developed within centuries and have remained up to now.

The analysis of verbal means etiquette communication of Turkish and Chuvash languages shows that we have a general layer of these means, characteristic for both languages, without dependence from a confessional accessory of their speakers. It is necessary to notice that Turks-Moslems use Arabian and Persian etiquette expressions more often than the Chuvash, and Chuvashs-Christians under the influence of Russian more often use Russian expressions and tracing-papers from Russian.

Using detailed comparative studying of these means of the Chuvash and Turkish and the semantic analysis of expressions we can see that these nations living for thousand kilometers from each other have much in common. Centuries of separate living and belonging to different faiths couldn't split the threads connecting two related Turkic nations.

**Keywords**: Chuvash, Etiquette, Formulas of speech etiquette, Speech Etiquette, Verbal Means Etiquette Communication, Traditional, Turkish, Turkic,

Кашни çын кулленхи пурнăçра тĕрлĕ çулти, тĕрлĕрен ĕçре вăй хуракан, урăх тата пĕр тăрăхра пурăнакан çынсемпе т. ыт. те хутшăнать... Этем ыттисемпе хутшăнмасăр пурăнма пултараймасть. Кун каçа, ĕмĕр тăршшĕнче этем урампа утса пынă чухне е пĕр-пĕр вырăнта вăй хунă вăхăтра, канма кайсан е вĕреннĕ тапхăрта яланах çынсемпе хутшăнать: вăл е ыйтса пĕлет, е ыйту çине хуравлать, е йăнăшшăн каçару ыйтать, е тепĕр çынна йĕркесĕр пулнăшăн асăрхаттарса калать[154]. Кирек мĕнле пулсан та, çынсен хутшăнăвĕ, хутшăну культури нисепрен (этикетран) пуçланать.

Этикет (< франц. e'tiquette) – çынсен ыттисемпе хутшăннă вăхăтра хăйсене тыткаламалли правилăсен пĕрлĕхĕ пулать. Чăваш чĕлхе пĕлĕвĕнче

---

[153] филологи ăслăлăхĕсен кандидачĕ, Александр Кузнецов, Чăваш патшалăх гуманитари слăлăхĕсен институчĕн, чĕлхе пĕлĕвĕ пайĕн ăслăлăх аслă ĕçченĕ.

[154] Горшков, А.Е., Чăваш чĕлхи: Лексика, фразеологи, пуплев культури: Вĕренӳ пособийĕ, Чăваш кĕнеке издательстви, Шупашкар, 1997.

«речевой этикет» пĕлтерĕше «пуплев сăпайлăхĕ», «пуплев этикечĕ», «пуплев нисепĕ» çаврăмсемпе палăртни тĕл пулать. Туркка нисепне тĕпчекенсем «этикета» франци чĕлхинчи этикет сăмахпах палăртнине[155] асăнаççĕ.

Кирек хăш халăхăн нисепĕнче те тăванла е кÿршĕлле пурăнакан халăхăн нисепĕнчи евĕр паллăсем пур. Анчах та ытти халăхсен этикетĕнчен уйăракан паллăсем яланах сыхланса юлаççĕ. Туркка тата чăваш нисепĕнче пĕр-пĕринчен уйăраканни сахалах мар. Çакă урăх тĕнпе тата тĕрлĕрен этнолингвокультура пĕрлĕхĕсем хушшинче пурăннипе пулса кайнă. Анчах та хутшăну этеплĕхĕнче, авалтан килекен нисепре çĕршер, пиншер çул каялла аталанса пирĕн куна çитнĕ пĕр-пĕринпе çыхăнтаракан, çывăхлатакан пĕрлехи тĕрĕк палăрăмĕсем пур.

Çынсен хутшăнура хăйсене тыткаламалли йĕрке пĕрлĕхĕнчи пире кăсăклантаракан ыйту – хутшăнура çынсем нисеп лексикипе мĕнле лару-тăрура усă курни, пуплевре вĕсем мĕнле вырăн йышăнни пулать. Нисеп лексикин сăмахĕ-çаврăмĕсене çак лару-тăрусенче усă куракан уйрăм ушкăнсем çине уйăрма пулать: 1) чĕнÿпе çын тимлĕхне хăвăр çине куçарни; 2) сывлăх сунни е саламлашу; 3) паллашу; 4) йыхрав; 5) кăмăл ыйтни, ыйтни, канаш, сĕнÿ; 6) кăмăл ыйтнине, ыйтнине тивĕçтернипе тивĕçтерменни, йыхăрава йышăннипе йышăнманни; 7) çын шухăшĕпе килĕшнипе килĕшменни; 8) каçару ыйтни; 9) ÿпкелешни; 10) йăпату, хĕрхенÿ, пĕрле куляннине пĕлтерни; 11) кăмăлласа калани, ырлани; 12) ырламанни, кăмăлламанни, ÿпкев; 13) саламлани, ырă сунни; 14) тав туни; 15) сывпуллашни т. ыт. те. Куратпăр ĕнтĕ, нисеп лексикин асăннă ушкăнĕсен единицисемпе эпир кунне вуншар хут усă куратпăр. Апла пулсан пирĕн пуплевре вăл питĕ пысăк вырăн йышăнса тăрать. Хальхи вăхăтри нисеп пĕр-пĕрне паллакан çынсене çеç мар, пачах палламан çынсене те сывлăх сунма хистет. Çынсем çапла майпа таврари çынсен тĕлĕшпе ырă, кăмăллă пулнине, вĕсемпе хутшăнăва кĕме хатĕррине, малашне те хутшăнса пурăнма хирĕç маррине палăртаççĕ.

Тĕрлĕ халăхăн нисепĕнче хăйне анчах тивĕçлĕ наци уйрăмлăхĕсем пулаççĕ. Çав уйрăмлăхсене сывлăх сунса каламалли сăмахсемпе сăмах çаврăнăшĕсем лайăх кăтартса параççĕ. Н.И. Егоров профессор шухăшĕпе килĕшÿллĕн, «кирек мĕнле чĕлхере те ырлăх-сывлăх сунмалли сăмах çаврăнăшăсемпе уйрăм сăмахсем пур, вĕсем пуплевре çирĕпленсе ларнă клишесем пулаççĕ. Чăвашăн халăхра сарăлнă нисеп сăмахĕсем темиçе ушкăна пайланаççĕ: пĕлĕш-тантăшпа чăваш пĕр тĕрлĕ саламлашать, ют çынпа – урăхларах; ахаль çÿрекен çынпа – пĕр тĕрлĕ, мĕн те пулин ĕçлекен çынпа тĕпĕр тĕрлĕ; урамра – пĕр тĕрлĕ, киле пырса кĕрсен тепĕр тĕрлĕ сывлăх ыйтаççĕ»[156].

«Энциклопедия этикета»[157] ĕçре те сывлăх суннин уйрăмлăхĕсем темиçе сăлтавран килнине палăртнă. Асăннă энциклопедире палăртнă шухăшпа килĕшес пулсан, мĕнле сăмахсемпе саламлашасси арçын е хĕрарăм, çамрăк е ватă пулнинчен, çавăн пекех калаçакансем мĕнлерех хутшăнура (çывăх юлташсем е

---

[155] Серебрякова, М.Н., О некоторых особенностях этноэтикета у современных турок, Этикет у народов передней Азии, Сборник статей, Главная редакция восточной литературы издательства "Наука", Москва, 1988, С. 221-263.
[156] Егоров, Н.И., А.В. Кузнецов çырнă «Чăваш чĕлхин пуплев нисепĕн сывлăх сунмалли тата сывпуллашмалли çаврăмĕсем» статьяна хаклани.
[157] Энциклопедия этикета, Рипол-Классик, Москва, 2001.

вăрçса-харкашса пурăнакансем, пĕлĕш-тантăш е пĕр-пĕрне палламан, ют çынсем) пулнинчен нумай килет, талăк вăхăчĕ те хăйне тивĕçлĕ сăмах е сăмах çаврăнăщĕ суйласа илме хистет.

Л.Т. Бабаханова чĕлхеçĕ çирĕплетнĕ тăрăх, уншăн тăван чĕлхе пулакан узбек чĕлхинче саламлашу сăмахĕсемпе сăмах çаврăнăшĕсем çирĕм ытла ушкăна пайланаççĕ[158].

Çӳлерех асăннă шухăшсене пĕтĕмлетсе эпир çакна çирĕплетме пултаратпăр: чăвашăн, ытти нумай халăхăнни пекех (уйрăмах, тухăç халăхĕсенни пек) сывлăх сунса каламалли сăмахсем нумай ушкăна пайланаççĕ, вĕсем пуплевре питĕ пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ, çынсен хутшăнăвĕнче питĕ пысăк пĕлтерĕшлĕ пулаççĕ.

Тухăç халăхĕсен (çав шутра чăвашсемпе турккăсен те. – А.К.) пуплев нисепĕнче эмоцилли, туйăмли тĕп вырăнта тăнине кулленхи сывлăх сунăм кӳлеписем уçăмлăн кăтартса параççĕ[159]. Пĕр-пĕр çын килне пырсан чăваш Сывă-и? Аван пурăнатăр-и-ха? тесе сывлăх сунать, кил хуçисем ăна Аван-ха, килех... тесе саламлаççĕ[160]. Чăваш пурнăçĕнче пĕрне-пĕри Сывă пурнатăр-и? – Аван-ха, хăвăрăн сывă пурăнаççĕ и? – Аван-ха, шĕкĕр турра![161], Чиперех и? – Чиперех-ха! Аптрамастпăр-ха! Лайăхах пурăнатпăр-ха! Йĕркеллех ха!; Килес-и? – Килес терĕм(ĕр)-ха! Килсе курас терĕм(ĕр)-ха! Килетĕп-ха![162]; Ларатпăр? – Ларатпăр-ха! Килетпĕр? – Килетпĕр-ха![163] çаврăмсемпе сывлăх сунни час-часах тĕл пулать.

Чăвашсемпе турккăсем пĕр-пĕринчен инçе пурăнни, вуншар ĕмĕр хутшăнăва кĕменни пурне те паллă. Апла пулин те, тĕрĕк халăхĕсен авалтан килекен пĕр йышши нисеп уйрăмлăхĕсем асăннă икĕ халăхăн паян кунччен упранса юлма пултарнă.

Нисеп турккăсен культуринче питĕ пысăк вырăн йышăнса социумри хутшăнусен чи пĕлтерĕшлĕ кӳлеписене йĕркелет. Кунти йăласем ытти çынсене чĕнмелли, вĕсен тимлĕхне куçармалли кашни пулăма валлиех сăмахпа каламалли çирĕп кӳлепе ыйтаççĕ тата çак ритуалсене тĕрĕс пурнăçланине пысăк пĕлтерĕшлĕ тăваççĕ.

Тараватлăх, хăнасене пăхма пĕлни (misafirperverlik) турккă культурин никĕсĕ пулать. Çакă уйрăмах ялсенче палăрать. Туссем, тăвансем, кӳршĕсем часчасах хăнана çӳреççĕ. Хăнана чĕнекенсем йыхравне питĕ илĕртӳллĕ, йышанмасăр йывăр сăлтавсемпе çирĕплетсе йĕркелеççĕ, çавăнпа та чĕнекене кӳрентермесĕр хăнана каяс мар, йыхрава йышăнас мар тесен питĕ асăрханулла пулмалла. Çакăн пек сĕнӳсенче нимле вăрттăн шухăш та çук, парнесем те кирлĕ мар. Пĕртен-пĕр

---

[158] Бабаханова, Л.Т., Ситуативные модели национальной культуры в речевом общении народов Востока, Языки, духовная культура и история тюрков: традиции и современность. Труды международной конференции в 3-х томах, Т. 1, Казань, 1992, С. 28-31.
[159] Çавăнтах.
[160] Тимофеев, Г.Т., Тăхăр ял /Сĕве тăрăшшĕнчи чăвашсем/. Этнографи очеркĕсемпе халăх сăмахлăхĕ, Шупашкар, 1972.
[161] Çавăнтах.
[162] Кузнецов, А.В., Чăваш Республикинчи Тăвай районĕн Тăрмăш ялĕнче 2000 çулта пухнă материал.
[163] Кузнецов, А.В., Чăваш Республикинчи Патăрьел районĕн Çĕньял ялĕнче 2001 çулта пухнă материал.

тĕллев – кăмăллă ушкăнпа кăсăк калаçса ларасси. Анчах кĕске вăхăт калаçса ларнă вăхăтрах сире темиçе хут та мĕн те пулин тутанса пăхма сĕнĕç. Турккăн кирек мĕнле пулсан та сире çитермелле-ĕçтермелле, тăрантмалла, выçă кăларса ямалла мар.

Çакăн пекрех пулăма эпир чăваш нисепĕнче куратпăр: хăйĕн патне пынă çынна чăваш килĕнче нимех пулмасан та çăкăрпа уйран, сĕт тавраше сĕнет, е шыв та пулин ĕçтерет. Апатланма килĕшмен çынна: «Çăкăртан аслă пулма хушман», – тесе ӳкĕте кĕртет.

Турккăсемпе чăвашсен тепĕр пĕр пек енĕ вăл – килнĕ хăнана килти-çуртри чи тутлă, чи лайăх ĕçмепе çимене сĕнесси. Турккăсемпе чăвашсем те ытти халăх çыннисем хăйсен йăлисене лайăхах пĕлменнишĕн питех кӳренмеççĕ, ăнланма тăрăшаççĕ.

Турккăсемпе чăвашсем сывпуллашнă чух çакăн пек çаврăмсем каласа сывпуллашни паллă:

тур. Talihiniz açık olsun! (тӳр. чăв. Телейĕр уçă пултăр!) ~ чăв. Телейлĕ пулăр!

тур. Talihiniz (talih) yar olsun! (тӳр. чăв. телейĕр (телей) тус (е юлташ) пултăр!) ~ чăв. Телейпе пĕрле çӳрĕр!

тур. Ugurlu olsun! (чăв. Телейлĕ пултăр!) ~ чăв. Телейлĕ пулăр!

тур. Devlet ve ikbalile! (чăв. Тивлетпе (е телейпе) ăнăçу (пĕрле)!) ~ чăв. Ăнăçу-телейпе пĕрле çӳре!; Ăнăçу-телей пултăр!

тур. Devletle! (чăв. Тивлетпе (пĕрле) е телейпе (пĕрле)!) ~ чăв. Телейпе пĕрле çӳре! т. ыт. те.

Пире кăсăклантаракан халăхсен нисепĕнче талăк вăхăтĕнчен килекен тата талăкĕпех усă куракан çаврăмсем сарăлнă.

М.Н. Серебрякова тĕпчевçĕ шухăшĕпе килĕшӳллĕн, кун каç еннелле кайсан, турккăсем Айдын геджелер! (чăв. Çутă каççем!), Ийи геджелер! (чăв. Ырă каççем!), Хайырлы геджелер! (чăв. Ырă (е лайăх, ăнăçлă) каççем!) тĕслĕхсене усă кураççĕ; хăйĕн килĕнче çĕр каçма юлнă хăнана кил хуçи çывăрма выртас умĕн Рахат уйкулар! (чăв. Кăмăллă (ырă, лăпкă) ыйхăсем (тĕлĕксем)!) тесе уйрăлать, хăна та çак сăмахсене каласа хуравлать.

Çак лару-тăрура чăвашсем Ырă каç пултăр!, Ыйху тутлă пултăр!, Ырă тĕлĕксем курмалла пултăр! тесе калаççĕ.

Турккăсен пуплевĕнче талăк вăхăтĕнчен килмен çаврăмсем пур. Çак ушкăнри çаврăмсенчен чи анлă сарăлни Аллаха ысмарладык! (чăв. [Сире] Аллаха (Турра) шанса паратпăр!) пулать. Çак çаврăм çине Гюле гюле! (чăв. Кула-кула!) (“пĕтĕм лайăххине [сунатпăр]!”; “лайăххине çеç [сунатпăр]!”; “тепре тĕл пуличчен!” пĕлтерĕшсемпе çӳрет), е унăн варианчĕ Гюле гюле гидингиз! (чăв. Кула-кула кайăр!) (“çулăр телейлĕ пултăр!” пĕлтерĕшпе усă кураççĕ).

Маларах асăннă сывпуллашу çаврăмĕсĕр пусне Аллаха эманет олун! (чăв. [Эсир] Аллаха (Турра) шанса панă çын пулăр!) (“чипер юл(ăр)!”; “тепре тĕл пуличчен!”; “Сана/сире Аллах (Турă) сыхлатăр!” пĕлтерĕшсемпе) çаврăма усă курма пултараççĕ.

Танлаштарса пăхсан, чăваш, турккă, узбек, туркмен, кăркăс тата казах чĕлхисенчи пуплев нисепĕн çаврăмĕсем пĕр евĕрлĕ пулни уçăмлăн курăнать.

Танлаштарăр: чăваш тата турккă чĕлхисенчи каякан хăнана ырă сунса ăсатса янă чух çакăн пек калаççĕ:

чув. Тивлетлĕ пулăр! Тивлетӳ пĕрле пултăр!;

тур. Ugurlu olsun! (чăв. телейлĕ пултăр!), Talihiniz (talih) yar olsun! (телейĕр (телей) тус (е юлташ) пултăр!), Talihiniz acık olsun! (чăв. Телейĕр уçă пултăр!)[164];

чув. Телейпе çӳре!

тур. Devlet ve ikbalile! «Телейпе ăнăçу пĕрле!»; Devletle! «Телейпе!» и т.д.

Каçпа сывпуллашмалли çаврăмсем çакăн пекрех:

чув. Ырă каç пултăр!

тур. Айдын геджелер! «Çутă каçсем!»; Хайырлы геджелер! «Ырă каçсем!»;

чув. Ыйху тутлă пултăр!;

тур. Рахат уйкулар! «Кăмăллă (ырă) ыйхăсем!»;

турк. Агшамыңыз хайырлы болсун! «Сирĕн каçăр ырă пултăр!» и т.д.

Инçе çула каякана çапла ырă сунса ăсатаççĕ:

чув. Телейлĕ çул (пултăр)!

тур. Гюле гюле (гидингиз)! (чăв. Кула-кула (кайăр)!);

кирг. Сапарынар оң болсун! «Çулçуревĕр ăнăçлă пултăр!»;

чув. Турăпа çӳрĕр!

тур. Аллаха ысмарладык! «Турра шанса паратпăр!»; Аллаха эманет олун! «Турра шанса панă çынсем пулăр!»

Хăнисем кил хуçисемпе сывпуллашса çапла калаççĕ:

чув. Чипер юл(ăр)!

турк. Хош гал(ын)! «Чипер юлăр!»;

кирг. Жакшы калгыла! «Лайăх юлăр!»;

чув. Сыв(ă) пул(ăр)!

узб. Саломат бул(инг)! «Сывă пулăр!»;

турк. Саг бол(уң)! «Сывă пулăр!»;

кирг. Соо бол(гула)! «Сывă пулăр!»;

чув. Чипер!; Хуш пулăр!

турк. Хош! «Чипер!»;

кирг. Кош! «Чипер!»;

чув. Чĕрĕ-сывă пул(ăр)!

узб. Хайр, саломат бул(инг)! «Телейлĕ, сывă пул(ăр)!»;

турк. Хош, саг бол(уң)! «Телейлĕ, сывă пул(ăр)!»;

кирг. Аман-исян бол(гула)! «Аван-чĕрĕ пул(ăр)!»;

чув. Тепре тĕл пуличчен, сыв(ă) пул(ăр)!;

кирг. Корүшкончо эсен болгула! «Тĕл пуличчен чĕрĕ пулăр!»; Корүшкончо аман бол(гула)! «Тĕл пуличчен аван пулăр!» и т.д.

Турккă тата чăваш халăхĕсен нисеплĕ хутшăнăвĕн сăмах хатĕрĕсене тишкерсе тухни пире çак икĕ чĕлхере тĕн уйрăмлăхĕсенчен килмен пĕр евĕр сăмах çаврăмĕсен сийĕ пуррине курма май парать. Мăсăльман турккăсем пуплевĕнче ытларах араб тата перс нисеп çаврăмĕсемпе усă курнине, Христос тĕнне йышăнтарнă чăвашсем юлашки темиçе вунă çуллăхра вырăс чĕлхинчен

[164] Русско-турецкий словарь. Около 47700 слов, Советская энциклопедия, Москва, 1972.

тӳррӗн е калькӑласа йышӑннӑ ҫаврӑмсемпе усӑ курма тытӑннине палӑртмалла.

Нисеплӗ хутшӑнӑвӑн сӑмах хатӗрӗсене танлаштаруллӑ тата пӗлтерӗшӗ тӗлӗшӗнчен тӗплӗн тишкерсе тухса эпир пӗр-пӗринчен пиншер ҫухрӑмра пурӑнакан турккӑсемпе чӑвашсен пӗр пекки, ҫывӑххи сахал мар пулнине куратпӑр. Ҫӗршер ҫул пӗр-пӗринчен уйрӑм, инҫетре пурӑнни тата тӗн уйрӑмлӑхӗсем икӗ тӑванла халӑха ҫыхӑнтаракан тымарсене татма пултарайман.